27-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1944 ОКТЯБРЬ 1 ВЫРСАРНИКУН 194(6689) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Хамăр кадрсен политикăллă пĕлĕвне тăтăшах ÿстерсе пырассишĕн

Ултă çул каярах, 1938 çулхи октябрĕн 1-мĕшĕнче, «ВКП(б) историйĕн кĕске курсĕ» пичетленсе тухрĕ. Марксизм-ленинизмăн тĕп пĕлĕвĕсене пĕтĕçтерсе паракан çак кĕнеке тухни пирĕн большевиксен партийĕн, çавăн пекех тата пĕтĕм совет халăхĕн идейăллă пурнăçĕнче çав тери пысăк событи пулса тăчĕ.

Пирĕн саманари чи чаплă произведенисен шутне кĕнĕ çак кĕнекере тĕнчери чи малта пыракан теорипе хĕçпăшалланнă Ленин—Сталин партийĕн, большевиксен аслă партийĕн пурнăçĕпе кĕрешĕвĕн опычĕ, наука енчен тĕплĕн те анлăн пĕтĕçтернĕ, кучухнехи общество аталанăвĕн тĕп законĕсене марксистла-ленинла теории сутнпе çутатса панă. Çавăнпа та ĕнтĕ, Сталин юлташ сывăххăн хутшăнса ĕçленипе тунă «ВКП(б) историйĕн кĕске курсĕ» пичетленсе тухни пирĕн çĕршывра марксистла-ленинла пропагандăна халиччен никăçан пулман пек анлăн сарма май туса пачĕ, пропаганда ĕçне теори тĕлĕшпе çÿллĕ пусăма çĕклеме пулăшрĕ.

Парти историйĕн кĕске курсĕ пирĕн мĕнпур партипе государство кадрĕсемшĕн, пĕтĕм совет интеллигенцийĕшĕн ĕçпе кĕрешÿри хĕçпăшал пулса тăчĕ; вăл хамăрăн кадрсене вĕрентсе çитĕнтерес ĕçе марксизм-ленинизм идейисен никĕсĕ çинче йĕркелеме май туса пачĕ.

«ВКП(б) историйĕн кĕске курсĕ» пичетленсе тухнă вăхăтра фашистла агрессорсем — Германипе Итали — Европăра тĕнчен иккĕмĕш вăрçин вутне çине тăрсах чĕртсе пынă, тĕнчери лару-тăру сивĕчленсе кайнă, Европăри халăхсем умне вăрçă хаяррăн сарăлса каяс хăрушлăх тухса тăнă. Çав вăхăт тĕлне мирлĕ социализм строительствинче пысăк çитĕнÿсем тунă пирĕн тăван çĕршыв умне те хăрушă вăрçă пĕлĕчĕсем каплана-каплана килнĕ.

Çак лару-тăрура ĕнтĕ халăха шухăшкăмăл тĕлĕшĕнчен, идея тĕлĕшĕнчен хĕçпăшаллантарасси уйрăмах пысăк вырăн йышăнса тăнă. Пирĕн парти историйĕн сталинла витĕмлĕхпе тата уçăмлăхпа çутатса панă опычĕ совет çыннисене пысăк событисем килсе çитес умĕн общество аталанăвĕн законĕсене, политикăллă кĕрешĕвĕн законĕсене пĕлнипе хĕçпăшаллантарма пулăшнă. Çакă вăл лару-тăру хăвăрт улшăнса пынă тапхăрта, этемлĕх историйĕ пысăк çаврăнусем тунă тапхăрта уйрăмах кирлĕ. Çавăнпа та ĕнтĕ, пирĕн тăвăллă саманара, Совет Союзĕнчи халăхсем фашистла нимĕç захватчикĕсене хирĕç Отечественнăй аслă вăрçă туса пынă кунсенче, «ВКП(б) историйĕн кĕске курсĕ» совет халăхĕпе Хĕрлĕ Çар хĕçпăшалĕсен шутĕнче тăрать.

Большевиксен партийĕ, пирĕн çулпуç Сталин юлташ марксистла-ленинла пропаганда ĕçне яланах питĕ пысăка хурса хакланă, ăна тăтăшах лайăхлатса пыма, унăн меслечĕсене пуянлатса пыма тăрăшнă, тăрăшаççĕ те. Теори фронтне кирек мĕнле сÿрĕклетнине те пирĕн парти хыттăн та çивĕччĕн сивлет.

Отечественнăй аслă вăрçă вăхăтĕнче пирĕн марксистла-ленинла литературăна, большевиксен партийĕн теориллĕ пуянлăхне çĕнĕ чаплă кĕнеке — Сталин юлташăн «Совет Союзĕн Отечественнăй аслă вăрçи çинчен» ятлă кĕнеки хутшăнчĕ.

Сталин юлташăн Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче тухса каланă сăмахĕсемпе приказĕсем хăйсен хăвачĕпе пирĕн парти историйĕнчи чаплăран та чаплă документсемпе танлашаççĕ.

Сталин юлташăн кĕнеки вăрçă кунĕсенче пирĕн партие, рабочи класа, мĕнпур ĕççыннисене çул кăтартса, ертсе пыракан кĕнеке пулса тăрать. Шалти политика ыйтăвĕсем тĕлĕшпе, вăрçăри тата пĕтĕм тĕнчери ыйтусем тĕлĕшпе мĕнле çул тытмаллипе вăл уçăмлăн кăтартса парать. Вăл практикăллă ĕçе ертсе пыма май парать.

Сталин юлташăн кĕнеки вăл — вăрçă çинчен калакан чăн-чăн наука. Вăл вăрçă пынă май туха тăракан пур ыйтусене те татса парать, вăл пире вăрçă мĕнле аталанса пынине тĕрĕс ăнланса илме тата йĕрп-таврари лару-тăрува тавçăрса илме вĕрентет.

Сталин юлташăн кĕнеки, пирĕн халăх хăвачĕн çăлкуçĕсене кăтартса парса, вĕсене ĕçпе кĕрешĕве мобилизацилет.

Çапла, пирĕн кадрсен, партире тăракан тата партире тăман большевиксен, мĕне тата мĕн вĕренмелли пур. Хамăрăн кадрсен теориллĕ пĕлĕвне ÿстермелли тĕп меслет вăл хальхи вăхăтра та «ВКП(б) историйĕн кĕске курсне», марксизм-ленинизм классикĕсен произведенийĕсене, Сталин юлташăн Отечественнăй аслă вăрçă çинчен çырнă кĕнекине харпăрхăй тĕллĕн вĕренесси пулса тăрать. Совет интеллигенцийĕн кадрĕсем, пропагандистсемпе агитаторсен кадрĕсем, вĕсен практикăллă ĕç темĕн пек нумай пулсан та, хăйсен пĕлĕвĕсене тăтăшах пуянлатса, тарăнлатса пыма тивĕçлĕ. Çакă вăл пирĕн кадрсене хăйсен практикăллă ĕçне татах та ытларах лайăхлатма пулăшать.

Сталин юлташ партин XVIII-мĕш съездĕнче кун пирки çапла каланă:

«...государство тата парти ĕçĕн кирек хăш отраслĕнчи работниксен те политикăллă пĕлĕвĕ тата марксистла-ленинла ăнланулăхĕ мĕн чухлĕ çÿллĕ, ĕç хăй те çавăн чухлĕ çÿллĕ тата ăнăçлăрах, ĕçĕн результачĕсем те çавăн чухлĕ пысăкрах, тата тепĕр майлă та пулать—работниксен политикăллă пĕлĕвĕ тата марксистла-ленинла ăнланулăхĕ мĕн чухлĕ каярах, ĕçре çавăн чухлĕ чăрмавсем тата ăнăçсăрлăхсем пулма пултараççĕ, работниксем çавăн чухлĕ вак-тĕвекленсе тата деляга-крохоборсем пулса кайма пултараççĕ, çавăн чухлĕ вĕсем пăсăлса кайма пултараççĕ».

Пирĕн районсенчи хăшпĕр парторганизацисенче пропагандăпа агитаци ĕçĕ çинчен сăмах хускатсан, пуринчен ытларах, предприятисемпе колхозсенче, учреждениссенче политинформацисем, калаçусем туса ирттерни çинчен, хаçат-журналсем вуласа пани çинчен калаçаççĕ. Ку кирлĕ ĕç, анчах кадрсен чăн-чăн теориллĕ вĕренĕвне, вĕсен идейăллă шайне ÿстерсе пырассине нимпе те пĕр политинформацисемпе тата калаçусемпе çеç улăштарма çук. Ку вăл пирĕн партиллĕ пропаганда ĕçне хисеплемени, унăн аслă та хăватлă вырăнне пĕчĕклетни пулнă пулĕччĕ. Анчах чылай çĕрте марксизм-ленинизм теорине, «ВКП(б) историйĕн кĕске курсне», Сталин юлташăн «Совет Союзĕн Отечественнăй аслă вăрçи çинчен» ятлă кĕнекине вĕренес ĕçе парторганизацисем юлашки вăхăтра япăхтарса янă. Кун пирки нумаях пулмасть пирĕн хаçатсенче Сĕнтĕр тата Советски районсем çинчен çырнă материалсем пичетленсе тухнăччĕ. Анчах, калăпăр, Первомайски, Тăвай, Хĕрлĕ Чутай, Чкаловски, Шăмăршă е тата ытти хăшпĕр райкомсем пирĕн ĕç ку тĕлĕшпе лайăххах тесе калама пултараççĕ-и-ха? Çук, пултараймаççĕ. Асăннă районсенче кулленхи массăллă-политикăллă ĕçе те çителĕксĕр туса пыраççĕ, партиллĕ пропаганда ĕçне вара пĕтĕмпех япăхтарса янă.

Чăн та, республика столицинче — Шупашкарта горкомăн парткабинечĕ парти историне хăйсем тĕллĕн вĕренекенсене пулăшас тĕлĕшпе лекцисем, консультацисем туса ирттерет, горкомăн лекторĕсем предприятисемпе учрежденисенче лекцисем вуласа параççĕ. Анчах кунта та парткабинетри лекцисемпе консультацисене çынсем питĕ сахал пухăнаççĕ. ВКП(б) хула комитечĕн пропагандăпа агитаци отделĕ парторганизацисенче марксистла-ленинла вĕренÿ ĕçĕ мĕнле пынипе питĕ сахал интересленет, вăл ку ĕçе ытларах парткабинет çине йăвантарма пăхать.

Вăрçă вăхăтĕнче ертсе пырас ĕçе çĕнĕ те çамрăк çынсем нумай хутшăнчĕç. Вĕсене çине тăрсах вĕрентмелле, марксизм-ленинизм теорийĕпе хĕçпăшаллантармалла. Ку ĕçре, паллах, пирĕн парти комитечĕсенчи пропагандистсен хăйсен тивĕçлĕ вырăнне йышăнмалла. Анчах пропагандистсемпе агитаторсем хăйсем те нумайĕшĕсем çĕнĕ çынсем пулса тăраççĕ. Апла пулсан, вĕсене вĕрентесси те—пысăк ыйту. Çав вăхăтрах чылай райкомсем хăйсен пропаганда работникĕсене хуçалăх кампанийĕсене ирттернĕ çĕрте ытларах ĕçлеттереççĕ, вĕсене хăйсен ĕçне туса пыма сахал пулăшаççĕ.

Партин районсемпе хуласенчи комитечĕсен задачи — пирĕн марксистла-ленинла пропаганда ĕçĕн законлă прависене ура çине тăратасси, пĕтĕм идейăллă-политикăллă ĕçе тĕпренех вăйлатса ярасси пулса тăрать. Çак ĕçе иккĕмĕш е виççĕмĕш вырăнта тăракан ĕç вырăнне хунине тÿсме çук.

Идеологи ĕçне вăйлатас тесен, идеологине пиçĕхсе йĕркелеме пулăшас тата ăна сарас тĕлĕшпе ĕçлекен учрежденисене парти организацийĕсен куллен те конкретлăн ертсе пымалла. Пирĕн парти комитечĕсен бюровĕсем хăйсен ларăвĕсенче идейăллă-политикăллă ĕçĕн ыйтăвĕсене пачах та сахал сÿтсе яваççĕ. Ертсе пырзакан юлташсем халăх хушшинче политикăллă докладсем çителĕксĕр тăваççĕ. Марксизм-ленинизм теорине хăйсем тĕллĕн вĕренекенсене пулăшас ĕçе кирлĕ пек организацилемен.

Пропаганда ĕçĕнче, массăллă-политикăллă ĕçре пирĕн совет интеллигенцийĕ пысăк вырăн йышăнса тăрать. Тÿрех каламалла, юлашки вăхăтра районсенчи чылай парторганизацисем хулари тата ялти интеллигенци хушшинчи политикăллă ĕçе вăйсăрлатнă. Пирĕн инженерсемпе агрономсем, учительсемпе наука работникĕсем, совет интеллигенцийĕн мĕнпур кадрĕсем халăх хушшинче тăтăшах ĕçлесе пымалла.

Хуласемпе район центрĕсенчи парткабинетсене пропагандăпа агитаци ĕçĕн чăн-чăн вучахĕсем туса хумалла. Парти историне, марксизм-ленинизм классикĕсен произведенийĕсене хăйсем тĕллĕн вĕренекен юлташсем кунта тивĕçлĕ пулăшу илме пултарччăр. Анчах чылай çĕрте, уйрăмах çуллахи вăхăтра, парткабинетсен ĕçне сÿнтерсе лартнă, унти библиотекăсене пуянлатса пымаççĕ, ун вырăнне час-часах пур пек литературăна та салатса пĕтереççĕ.

Нумаях пулмасть партин Центральный Комитечĕ «Тутар парторганизацинче массăллă-политикăллă ĕç тата идеологи ĕçĕ мĕнле пулса пыни çинчен тата çав ĕçе лайăхлатмалли мерăсем çинчен» постановлени йышăнчĕ. Çав постановленире кăтартса панисем пĕтĕмпех пирĕн республикăри парторганизацисене те пырса тивеççĕ.

Эпир хальхи вăхăтра пурăнса ирттерекен услови партин мĕнпур сыпăкĕсенче идеологи ĕçне тĕпренех лайăхлатма, марксистла-ленинла пропагандăна анлăнрах сарса пыма хушать. Пирĕн çынсем хамăр аталанăвăн тĕп çулĕйĕрĕ çине, хамăр куллен хутшăнса пыракан историллĕ событисем çине ăнланулăн пăхни, совет çыннисем марксистла-ленинла идеологин тасалăхне чыслăн тытса пыни,—акă мĕн кирлĕ пире халĕ, Отечественнăй аслă вăрçăн ответлă та татăклă тапхăрĕнче. Мĕнпур массăллă-политикăллă ĕçе тата идеологи ĕçне республика умĕнче тăракан хуçалăхпа политика задачисемпе çыхăнтарса пырса, пирĕн çав задачăсене ăнăçлăн пурнăça кĕртмелле.

Польша халăхĕн ирĕклĕх комитечĕн представителĕсем Мускава килни

Сентябрĕн 28-мĕшĕнче Мускава Польша халăх совечĕн председателĕ **Берут** господин, Польша халăхĕн ирĕклĕх комитечĕн председателĕ **Осубка-Моравский** господин, А. Витос господин, **Роля-Жимерский** генерал-полковник тата **Ржимовский** господин килнĕ.

Аэродромра вĕсене Ют çĕршыв ĕçĕсен Халăх Комиссарĕн заместителĕ **Вышинский** юлташ, Совет правительствин Польша халăхĕн ирĕклĕх комитечĕ çумĕнчи представителĕ **Булганин** генерал-полковник тата ыттисем те хирĕç тухса кĕтсе илнĕ.

Сталин юлташ Польша представителĕсене йышăнни

Сентябрĕн 29-мĕшĕнче **И. В. Сталин** юлташ Люблинран килнĕ Польша халăх совечĕн председательне Берут господина, Польша халăхĕн ирĕклĕх комитечĕн председательне **Осубка-Моравский** господина, председатель заместительне **Витос** господина, **Роля-Жимерский** генерал-полковника тата **Ржимовский** господина йышăннă.

Калаçура **Молотов** юлташ пулнă.

Ленинград фрончĕн çарĕсем кăçалхи сентябрĕн 17-мĕшĕпе 26-мĕшĕ хушшинче наступлени тунă вăхăтра тăшман тÿснĕ çухатусем тата пирĕн çарсем тытса илнĕ трофейсем

ЛЕНИНГРАД фрончĕн çарĕсем. Совет Союзĕн Маршалĕ **ГОВОРОВ** командир пулса ертсе пынипе, сентябрĕн 17-мĕшĕпе 26-мĕшĕ хушшинче наступлени тунă вăхăтра тăшмана çынсемпе техника тĕлĕшĕнчен çакăн пек çухатусем тÿстернĕ:

ПĔТЕРСЕ ТАКНĂ: танксемпе хăй тĕллĕн çÿрекен тупăсем—87, тĕрлĕ калибрлă тупăсем—230, минометсем—260, пулеметсем—680, автомашинăсем—550, çар хатĕрĕсем тиесе лартнă чугун çул вагонĕсем — 1.440, боеприпаспа горючи склачĕсем—86.

Тăшманăн, вилнисене кăна шутласан та, 30.000 салтакпа офицер ытла пĕтнĕ.

Çав вăхăт хушшинчех **ЛЕНИНГРАД** фрончĕн çарĕсем çакăн пек трофейсем **ТЫТСА ИЛНĔ:** самолетсем—35, танксем —88, тĕрлĕ калибрлă тупăсем—363, минометсем—495, пулеметсем—938, винтовкăсемпе автоматсем—20.000 таран, автомашинăсем—981, карапсемпе катерсем—49, тягачсем—57, çар пурлăхĕпе апат-çимĕç тиенĕ чугун çул эшелонĕсем—29, чугун çул вагонĕсем—2.239, паровозсем—98, боеприпас, хĕçпăшал, снаряжени тата апат-çимĕç склачĕсем—165.

15.745 нимĕç салтакĕпе офицерне **ТЫТКĂНА ИЛНĔ.**

Çав наступлени вăхăтĕнче **ЛЕНИНГРАД** фрончĕн çарĕсем Совет Эстонин пĕтĕм территорине (Эзель тата Даго утравĕсемсĕр пуçне) ирĕке кăларнă, тăшман хăйĕн çар техникин чи кирлĕ хатĕрĕсемпе çыннисене пĕтĕмпе çакăн чухлĕ çухатнă: тыткăна илнисемпе вилнисем—45.745 çын, самолетсем—35, танксемпе хăй тĕллĕн çÿрекен тупăсем—175, тĕрлĕ калибрлă тупăсем—593, минометсем—755, пулеметсем — 1.618, автомашинăсем — 1.531.

СОВИНФОРМБЮРО.

Совет Информаци Бюровĕнчен

СЕНТЯБРĔН 29-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Сентябрĕн 29-мĕшĕнче пирĕн çарсем **РИГА** хули енче хăйсен позицийĕсене лайăхлатассишĕн çапăçнă, халăх пурăнакан 30 пункта ытла туртса илнĕ, вăл шутра — **ЭЙКАЖИ, СВИТИ, КАРТУЖИ, ПАНТАРИ.**

Дрогобыч облаçĕнчи **ТУРКА** хулинчен кăнтăртарахра тата кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре пирĕн çарсем, сăртлă-вăрманлă вырăнти йывăр условисенче тăшманпа çапăçса, малалла куçса пынă, халăх пурăнакан 60 пункта ытла туртса илнĕ, вăл шутра — **ВЫСОЦКО ВЫЖНЕ, КРАСНЕ, МОХНАТЕ, ОРАВА, КОЗЕВА, ГОЛОВЕЦКО, ЛИБОХОРА, СЛАВСКО, ЛУДВИКУВКА, ВИШКУВ** ятлă пысăк ялсем тата **ГРЕБЕНУВ, ЗЕЛЕМЯНКА, РОЖАНКА** ятлă чугун çул станцийĕсем.

Станислав облаçĕнчи **ДЕЛЯТИН** хулинчен хĕвеланăçнерехре тата кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем, сăртлă-вăрманлă вырăнта тăшман хирĕç тăнине çĕнтере-çĕнтере тата унăн инженери чăрмавĕсене çĕмĕре-çĕмĕре, халăх пурăнакан 40 пункта ытла туртса илнĕ, вăл шутра — **ОСМОЛОДА, БУРСУЧНА, ЗЕЛЕНА, ПОЛЯНИЦА, ВОРОХТА, АРДЖЕЛЮЖА** ятлă пысăк ялсем тата **БУРСУЧНА, ЗЕЛЕНА, ВОРОНЕНКА, ВОРОХТА** ятлă чугун çул станцийĕсем.

Çурçĕр Трансильванире пирĕн çарсем, тăшман хирĕç тănине çĕмĕрсе тăкса, **ТЫРГУ-МУРЕШ** хулине туртса илнĕ, çавăн пекех тата, тăшманпа çапăçса, халăх пурăнакан ытти 50 пункта ытла йышăннă, вăл шутра — **ЕРНУТЕНЫ, ПЕТЕЛЕ, ХАБИК, КЭРТВЕФАЯ, ЯРАДЕ-МУРЕШ, НАДЬ-ЭРНЬЕ, ТОРФАЛВА** ятлă пысăк ялсем тата **КУРТИФАЯ, ГЫРНЕШТИ, ТИНОИЗА, ЭРНСЮ-МАРЕ, МУРШЕЛ, НЬЯРАДТЕ** ятлă чугун çул станцийĕсем. Пирĕн наступлени туса пыракан чаçсем **МУРЕШУЛ** шывĕ урлă каçнă та унăн хĕвеланăç хĕрринче плацдарм туртса илнĕ. Çав плацдармра **АПАЛИНА, ВАЙДА-СЕНТ-ИВАН, КИНАРЬ, КУРТЕНЫ, РЕМЕТЕШЬ** ятлă ялсем пур.

Фронтăн ытти участокĕсенче разведчиксем шыраса çÿренĕ тата чылай пунктсенче тĕллĕн-тĕллĕн çапăçнă.

Сентябрĕн 28-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 29 танкне çĕмĕрсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зениткăй артиллери тăшманăн 21 самолетне персе ÿкернĕ.

☆ ☆ ☆

Рига хули енче пирĕн çарсем тăшманăн Ригăна пырса кĕмелли çулсене хÿтĕлекен хăватлă оборона позицийĕсем патне пырса тухнă, пирĕн çарсем унта хăйсен позицийĕсене лайăхлатассишĕн çапăçнă. Разведка пĕлнĕ тăрăх, нимĕçсен кунти оборона тăрăхĕнче темиçе рет траншея чавса тухнă, вĕсене çын çÿллĕшех чавнă, траншейăсем умне минăсем лартса тултарнă тата пралук карса тухнă. Гитлеровецсем хăйсен позицийĕсем патне пымалли пур вырăнсене те тупăсемпе тата пулеметсемпе тĕл тивмелле персе тăраççĕ. Пĕр соединени чаçĕсем, Рига заливĕ çыранĕнче çапăçса, окопсен пĕрремĕш линине вăркăнса кĕрсе кайнă та ăна нимĕçсенчен тасатнă. Çапăçу хирĕнче тăшманăн темиçе çĕр вилли выртса юлнă. Трофейсем тытса илнĕ. Тыткăна илнисем пур. Çак çапăçура Сычегов красноармеец чапа тухнă. Вăл ручной пулеметпа нимĕçсен туппи патне шуса пынă та тупă расчетне вĕлерсе пĕтернĕ. Тепĕр участокра Быгодский лейтенант хăй тĕллĕн çÿрекен тупă çине лартнă боецсен ушкăнĕпе пĕрле нимĕçсен артиллери батарейи тăракан вырăна татса кĕрсе кайнă. Пирĕн боецсем тăшман артиллерисчĕсене вĕлерсе пĕтернĕ те, батарея тупписене тытса илсе, çав тупăсемпе тăшмана пеме тытăннă.

* * *

Псков хулипе Рига хули хушшинчи шоссе çулĕн районĕнче пирĕн çарсем темиçе ял туртса илнĕ. Çав тери хăвăрт атакăласа, гитлеровецсене Сигулда хулинчен 8 километр çурçĕртерехри Эйкажи ятлă тĕреклетнĕ пунктран хĕссе кăларнă. Çак участокри çапăçусенче нимĕç пехотине пĕр батальона çити пĕтерсе тăкнă. Темиçе вунă пулемет тата боеприпас склачĕ тытса илнĕ.

Çанталăк пĕлĕтлĕ тата тĕтреллĕ тăрать пулин те, пирĕн авиаци çаплах тăшман çарĕсене пыра-пыра çапнă. 90 автомашина çĕмĕрнĕ, 8 артиллери батарейине, 2 паровоз, 15 вагон пĕтерсе тăкнă, 5 боеприпас складне сирпĕнтерсе янă. Сывлăшри çапăçусенче совет летчикĕсем нимĕçсен 16 самолетне персе ÿкернĕ.

* * *

Дрогобыч облаçĕнчи Турка хулинчен кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре ту айккисенче çирĕпленсе ларнă тăшман хытă хирĕç тăнă. Пĕр соединени чаçĕсем тăшмана аякран кайса çавăрса илнĕ те нимĕçсен оборонине йĕркерен кăларнă. Вара çитĕнĕве вăйлатса пырса, 20 километр таран малалла кайнă. Тăшмана Высоцко-Выжне тата Козева ятлă вăйлă çирĕплетнĕ оборона рубежĕсенчен хĕссе кăларнă. Хаяр çапăçусем хыççăн пирĕн çарсем Дрогобыч облаçĕнчи район центрне Славско ялне туртса илнĕ. Трофейсем тытса илнĕ. Нимĕçсемпе венгерсен 250 салтакĕпе офицерне тыткăна илнĕ.

* * *

Станислав облаçĕнчи Делятин хулинчен хĕвеланăçнерехре тата кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем çапăçса малалла куçса пынă, нимĕçсен темиçе тĕреклетнĕ пунктри гарнизонĕсене аркатса тăкнă. Нимĕçсен оборонин Ворохта ятлă хăватлă узелĕшĕн вăйлă çапăçусем пулса иртнĕ. Çав яла пирĕн чаçсем илнĕ хыççăн тăшман 8 хутчен контратака тунă. Пĕр чаçри подразделенисем тăшманăн атакисене пурне те сирсе янă. Нимĕçсем, тем пек хăтлансан та, хăйсен пĕрре çухатнă позицийĕсене каялла туртса илме пултарайман. Ворохта ялĕпе чугун çул станцине пырса кĕмелли вырăнсенче тăшманăн 400 вилли ытла выртса юлнă. Пирĕн çарсем Прут шывĕ урлă каçнă та Совет Союзĕпе Чехословаки чиккинчен пĕр километртра ларакан Вороненка чугун çул станцине туртса илнĕ. Юлашки çапăçусенче совет чаçĕсем нимĕçсен пĕр пехотнăй дивизине тата венгерсен горно-стрелковăй дивизине йывăр çухатусем кÿнĕ. Тыткăна чылай илнĕ. Тăшмантан 34 тупă, 200 пулемета çити, боеприпассен, инженери пурлăхĕн тата апатçимĕçĕн 9 складне тытса илнĕ.

* * *

Çурçĕр Трансильванире нимĕçсемпе венгерсем Тыргу-Муреш хулине пырса кĕмелли çулсем çине тухнă совет чаçĕсене каялла хăваласа яма тăрăшнă, татти-сыпписĕр контратакăсем тунă. Тăшмана хаяран кăларнă хыççăн пирĕн çарсем Тыргу-Муреш хулине вăркăнса кĕрсе кайнă та урамсенче пулса иртнĕ вăйлă çапăçусем хыççăн çав хулана тытса илнĕ. Совет подразделенийĕсем тата Мурешул шывĕн сулахай хĕрринче чылай ял туртса илнĕ. Тăшмана хăйĕн вăйĕсене йĕркене кĕртсе оборона организацилеме вăхăт памасăр, пирĕн боецсем Мурешул шывĕ урлă каçса кайнă. Кун каçиччен тăшманăн 1.500 салтакĕпе офицерне çити пĕтерсе тăкнă. 800 гитлеровеца тыткăна илнĕ. Тепĕр участокра совет боецĕсем çавăрса илнĕ венгерсен 11-мĕш пехотнăй полкĕн батальонĕ тыткăна парăннă. Венгер офицерĕсем хирĕç тăрса çапăçасшăн пулнă, анчах та вĕсене хăйсен салтакĕсемех вĕлерсе пĕтернĕ. Вара венгер салтакĕсем алăри хĕçпăшала пăрахнă та шурă флаг çĕкленĕ.

* * *

Хĕрлĕ Ялавлă Балтика флочĕн авиацийĕ Рига заливĕн кăнтăр пайĕнче нимĕçсен 5.000 тонна таякан транспортне шыва путарнă.

Еçсыннн депутачĕсен райсовечĕсен исполкомĕсемпе ВКП(б) райкомĕсем тăратнă тăрăх, тырпул пухса кĕртес ĕçре тухăçлăн тата лайăх ĕçленĕшĕн ялхуçалăхĕнче малта пыракансен республикăри Хисеп хăми çине çак колхозсене кĕртнĕ:

Канаш районĕ тăрăх:

43. **«Акатуй»** колхоз (председателĕ **Амбросимов** юлташ). Колхоз тырăсене вăхăтра вырса пĕтернĕ тата капана хывнă. Кĕрхи тырăсем акмалли плана тултарнă, Государствăна тырă парса татнă.

Шупашкар районĕ тăрăх

44. **«Осоавиахим»** колхоз (председателĕ **Чечнев** юлташ, комсомолăн пуçламĕш организацийĕн секретарĕ **Попова** юлташ). Çак колхоз тырпулсене пĕр тăккаламасăр пухса кĕртнĕ, ыраша вăхăтра акса пĕтернĕ, авăн çапассине сентябрĕн 20-мĕшĕ тĕлне вĕçленĕ, государствăна ялхуçалăх продукчĕсене пĕтĕмпех парса татнă, 1945 çулшăн аванс шучĕпе 50 центнер тĕштырă панă.

44. **Молотов ячĕпе тăракан** колхоз (председателĕ **Петров** юлташ). Çак колхоз тырпулсене пĕр тăккаламасăр пухса кĕртнĕ, сентябрĕн 20-мĕшĕ тĕлне авăн çапса пĕтернĕ, государствăна ялхуçалăх продукчĕсем парса татнă тата 1945 çулшăн аванс шучĕпе 150 центнер панă.

45. **«Арăслан»** колхоз (председателĕ **Степанов** юлташ). Колхоз тырпулсене ăнăçлăн вырса пĕтернĕ, сентябрĕн 20-мĕшĕ тĕлне авăн çапса пĕтернĕ, государствăна тырă срокчен парса татнă.

46. **Ворошилов ячĕпе тăракан** колхоз (председателĕ **Петрова** юлташ). Колхоз срокчен тырă вырса пухнă, сентябрĕн 20-мĕшĕ тĕлне авăн çапса пĕтернĕ, ыраша лайăх вăхăтра акса хăварнă, государствăна тырă парса татнă.

Кунне-çĕрне пĕлмесĕр, вăя шеллемесĕр

Мăн Йĕкĕт ялĕнче ĕçе юратакан тата ăна тĕплĕн тăвакан колхозниксем сахал мар, ялхуçалăх ĕçĕнче нумай çул хушши ĕçлекен опытлă мастерсем пур. Эпĕ хам ĕçре çавсем çине яланах шанса пытăм. Ватă стариксемпе канашласа, вĕсене колхозăн ертсе пырас ĕçĕсене явăçтартăм.

Малтанах эпĕ, председателе суйласан, колхозра ĕç дисциплинине çирĕплетессишĕн тăрăшрăм. Эпир ĕç нормисене тепĕр хут пăхса тухса, колхозниксен пĕрлешÿллĕ пухăвĕнче çирĕплетрĕмĕр.

СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ тырпулсене пухса кĕртесси тата ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлесси çинчен йышăннă постановлени кашни колхозникех тĕплĕн ăнлантарса панă. Çакăн хыççăн вара колхозниксем хушшинче пысăк тухăçлăхпа ĕçлессишĕн ăмăрту пуçланса кайрĕ. Ĕçе начар тăвакансене ĕçкунĕ паман, ун вырăнне тепĕр колхознике ĕçлеттернĕ, ăна ĕçе çиелтен тăвакан колхозникăн ĕçкунне панă.

Пирĕн колхозăн кĕртыррисене планпа 8 кун хушшинче вырмалла пулнă, эпир 6 кун хушшинче вырса пĕтертĕмĕр. Çуртырисене те планпа кăтартнинчен малтан вырса капана хывнă. Аиса пулнă тырпула пухса кĕртес енĕпе бригадăсем хушшинче пыракан социализмлă ăмăртура Мурзин бригади мала тухрĕ. Пирĕн колхоз государствăна тырă парса татрĕ ĕнтĕ, сентябрĕн 15-мĕшĕнче пĕтĕм кĕлтесене турттарса капана хывса лартрăмăр.

Колхозниксен ĕçри хастарлăхĕ пысăк. Вĕсем тăрăшса ĕçленипе кăçал пирĕн тырăсем, иртнĕ çулхипе танлаштарсан, 2 хут лайăхрах пулчĕç. Пирĕн «Красный Октябрь» колхозра ĕçкунĕсен минимумне тултараймаи колхозниксем çук. Колхоз ĕçне ватти-вĕтти пĕтĕмпех хутшăнаççĕ, кулленхи нормăсене ытлашшипех тултарса пыраççĕ.

Пирĕн колхозниксем кунне-çĕрне пĕлмесĕр, ывăннине туймасăр ĕçлеççĕ. Октябрĕн 10-мĕшĕ тĕлне авăн çапса пĕтеретпĕр. Октябрьти социализмлă аслă революци 27 çул тултарнине эпир ялхуçалăх ĕçĕсене пĕтĕмпех вĕçленипе кĕтсе илетпĕр.

Пирĕн колхоз государство умĕнчи пур обязательствăсене те пурнăçларĕ. Халĕ кăçалхи тупăша ĕçкунĕсем тăрăх валеçме хатĕрленетпĕр.

Ф. ОХАНДЕРОВА,
Етĕрне районĕнчи «Красный Октябрь» колхоз председателĕ.

Пикенсех çĕртме тăваççĕ

ШАХАСАН. Иртнĕ çулта Тури Сурăмри «Заря» колхозра кĕрхи çĕртме çине çителĕксĕр çаврăнса пăхнă. Çавна пула кăçалхи çураки вăрăма тăсăлчĕ тата тырпул тухăçĕ те каярах пулчĕ. Çак йăнăша шута илсе, кăçал «Заря» колхоз членĕсем кĕрхи çĕртме вăхăтра тума шут турĕç. Колхозăн пĕтĕмпе 200 гектар кĕрхи çĕртме тумалла пулсан, паянхи куна 134 гектар сухаланă та ĕнтĕ. Кĕрхи çĕртме сухине тума кашни бригадăрах уйрăм лашасемпе уйрăм çынсем уйăрнă. Вăл лашасене ытти ĕçсенче ĕçлеме ямаççĕ, мĕн иртен пуçласа каçченех çĕртме тунă çĕрте усă кураççĕ.

Çак питех те паха ĕçе пысăк пахалăхпа тăвассишĕн колхозниксем пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлеççĕ. Çĕртме сухине 15 сантиметр тарăнăшĕ сухалаççĕ, плугсене яланах тĕрĕслесе тăнине пула, çĕре лайăх çаврăттарса пăрахаççĕ.

Ăмăртура пуринчен малта пыраканни — Отечественнăй вăрçă инваличĕ П. Дмитриев ертсе пыракан 1-мĕш бригада. Вăл хăйĕн планне 80 процент таран тултарнă. Çĕртме тăвакансем Е. Николаевăпа П. Петрова хăйсен кулленхи нормине яланах ирттерсе тултараççĕ. Вĕсене кура ытти бригадăсенчи колхозниксем те çине тăрса ĕçлеççĕ.

Ст. АСЛАН.

Чăваш сачĕсене çĕнĕрен чапа кăларар

1939—1941-мĕш çулсенчи шартлама сивĕсем килсе çитиччен Чăваш республикинчи пасарсенче пулнă çынсем унта тутлă панулмисем, сливăсем тата ытти çимĕçсем нумай пулнине лайăх пĕлеççĕ. Пирĕн республикăри садсенче çитĕннĕ аниссем, антоновкăсем тата ытти йышши панулмисем Свердловск, Челябинск, Ижевск, Омск, Новосибирск тата ытти нумай хуласенче те мухтавлă вырăнта пулнă.

Мирлĕ строительство çулĕсенче пирĕн республикăра садсем 10 пин гектар ытла çĕр йышăнса тăнă. Республикăри колхозсенчен 50 процентĕн обществăллă садсем пулнă. Çав садсенчен нумайăшĕсем çимĕçсем пама пуçланăччĕ. Пирĕн республикăра колхозниксенчен 30 процентĕ хăйсен пахчисенче улмуççисемпе çырла йывăççисем лартса ÿстернĕ (Мускав облаçĕнче ун пек хуçалăхсем 19 процент шутланнă, Крым республикинче 22 процент, Тутар республикинче вара 4 процент çеç пулнă).

Вăрçă умĕнхи çулсенче колхозниксен тата рабочисемпе служащисен пахчисенче çулсеренех 75—100 пин йывăç лартнă. Хĕрлĕ Чутай районĕнчи колхозниксен сачĕсем 600 гектар çĕр йышăнса тăнă. Кувакино районĕнче кашни колхозрах тата кашни колхозникĕнех садсем пулнă. Садсем тупăш нумай панă. Çавăнпа пĕрлех вĕсем колхоз пурнăçне те илемлетсе тăнă.

Эпир хамăр республика умне садсем ĕрчетес ĕçе малалла вăйлатса пырса, кашни колхозрах тата кашни колхозникĕн, рабочин, служащин пахчинчех улмуççисемпе çырла йывăççисем лартса çитĕнтерес задача лартнăччĕ. Çакна пурнăça кĕртме пирĕн пур условисем те пулнă. Садсем лартса ÿстерес ĕçе нимĕн те чăрмантарма пултарайман. Анчах та юлашки çулсенче хĕлсем калама çук сивĕ пулни пирĕн республикăри садсене чылай пысăк сиен кÿчĕ.

Çавна пула вара пирĕн халăх питĕ кирлĕ çимĕççемсĕр—панулмисĕр, чиесĕр, сливăсăр тăрса юлчĕ. Çав çимĕçсем çитменни уйрăмăнах халĕ, вăрçă вăхăтĕнче, хытă сисĕнет.

Апла пулсан, çĕрĕç органĕсенче ĕçлекен работниксен сивĕпе пĕтнĕ садсем вырăнне çĕнĕрен садсем лартса ÿстерес ĕçе çийĕнчех çанна тавăрса тытăнмалла пулнă. Анчах та çак ĕçе иртнĕ 1943 çулта кăна тытăннă. Вăл çул колхозсенче çĕнĕрен 72 гектар çине тата малтан садсем пулнă 478 гектар çине улмуççисемпе çырла йывăççисем лартса хăварнă. Унсăр пуçне, колхозниксемпе рабочисен пахчисенче 45 пин улмуççи тата чие йывăççи лартса хăварнă.

Садсем лартса ÿстерес тĕлĕшпе Ишлей, Канаш, Сĕнтĕр, Кувакино, Çĕрпÿ тата ытти хăшпĕр районсенче лайăх ĕçленĕ. Сăмахран, Сĕнтĕр районĕнче 1943 çулта 22 колхоз сивĕпе пĕтнĕ 70 гектар çинчи садсене чĕртнĕ тата çĕнĕрен 25 гектар çине улмуççисемпе çырла йывăççисем лартса хăварнă. Унсăр пуçне, колхозниксен пахчисенче 9.780 йывăç лартнă.

Республикăри колхозсем нумайĕшĕ халь садсем лартса ÿстерес ĕçе тивĕçлипе хаклаççĕ. Улатăр районĕнчи «Путь Ильича» колхозра сивĕпе пĕтнĕ 11 гектар çинчи сада чĕртнĕ. Унта питомнике те лайăх пăхса усраççĕ. Вăл питомникрен кăçал кĕркунне лартма 4000 тĕп улмуççи илеççĕ. Çитес çулта та çавăн чухлех илме пултараççĕ. Ишлей районĕнчи «Красный пахарь» колхозра та сад лартса ÿстерес тĕлĕшпе тимлĕн ĕçлеççĕ. Унта сада пĕтĕмпех юсаса йĕркене кĕртнĕ, йывăççем хушшине çырла тĕмĕсем лартнă. Çав районти «Хĕрлĕ Явăш» колхоз та сад лартса ĕрчетес тĕлĕшпе начар мар ĕçлет. Канаш, Çĕрпÿ тата ытти районсенчи колхозсенче те кăçал сахал мар йывăç лартса хăварнă.

Анчах та Йĕпреç, Муркаш, Курачăк тата ытти хăшпĕр районсенчи çĕрĕç органĕсен руководителĕсем садсем лартса ÿстерес ĕçе çултан çулах пурнăçа кĕртмеççĕ. Çапла вара вĕсем пĕтĕм республикăна каялла туртса пыраççĕ.

Халĕ ĕнтĕ улмуççисемпе çырла йывăççисене лартмалли вăхăт çитрĕ. Çанталăк калама çук лайăх тăрать. Пирĕн республикăри питомниксен лартмалли йывăççем питĕ нумай. Вĕсем плана тултарма кăна мар, ăна ирттерсе тултарма та çитеççĕ. Кашни колхоз, кашни колхозник, кашни рабочипе служащи лартмалли йывăççем хăйне кирлĕ таран государство хакĕпех илме пултарать. Питомниксем халĕ лартмалли йывăççем пама тытăннă. Халĕ ĕнтĕ йывăççем лартас ĕçе пурнăça кĕртесси — ответлă та хисеплĕ задача пулса тăрать.

Çак тапхăрта çĕрĕç органĕсемпе агрономсем колхозсемпе уйрăм çынсен участокĕсенче улмуççисемпе çырла йывăççисем лартса хăварас ĕçе пуçарса пыма тивĕçлĕ. Пирĕн садсем лартса ÿстерес ĕçе малалла аталантарма пур майсемпе условисем те çителĕклĕ. Тимлĕн, çине тăрса ĕçлени çеç кирлĕ.

Большевикла тимлĕхпе ĕçлесе, чăваш сачĕсене çĕнĕрен чапа кăларар, çĕршывпа фронт валли сад çимĕçĕсем çителĕклĕ памалла тăвар.

ОСАНОВ,
Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн садсем ÿстерес тĕлĕшпе ĕçлекен Управленийĕн начальникĕ.

Отечественнăй вăрçă фрончĕсенче

Укерчĕк çинче: Икĕ хут Совет Союз Геройĕ гварди капитанĕ С. Д. Луганский. Вăл хăй пĕччен нимĕçсен 37 самолетне персе ӳкернĕ тата унсăр пуçне тăшманăн 6 самолетне ытти летчиксемпе пĕрле çапăçса пĕтерсе тăкнă.

Д. ЧЕРНОВ фотоӳкерчĕкĕ. (ТАСС фотохроники).

Тинĕс-çар флочĕн летчикĕсем Балтика тăрăхĕшĕн çапăçнă çĕрте

ХĔРЛĔ ЯЛАВЛĂ БАЛТИКА ФЛОЧĔ, сентябрĕн 29-мĕшĕ. (ТАСС спецкорĕ). Ленинград фрончĕпе Балтика тăрăхĕнчи фронтсен çарĕсем, наступлени туса пырса, пуш кун хушшинче Совет Эстонин пĕтĕм территорине тата Совет Латвийĕн чылай пысăк пайне тăшмантан тасатнă. Совет çарĕсем вирлĕн малалла куçса пынă пирки нимĕçсем хăйсен Балтика тăрăхĕнче пухăннă техникине, боеприпасĕсене, çар пурлăхне тата апат-çимĕçне чугун çулсемпе тата шоссе çулĕсемпе каялла илсе каяйман. Çав пурлăхсене çăлса хăварас тесе, Германи командованийĕ вĕсене Балтика тăрăхĕнчи портсенчен тинĕс урлă илсе кайма хăтланса пăхнă.

Юлашки çапăçусем умĕнхи уйăхсенче Хĕрлĕ Ялавлă Балтика флочĕн авиацийĕ тăшман суднисене çӳреме час-часах чарнă. Совет торпедоносецĕсемпе, пикировщикĕсемпе тата штурмовикĕсемпе тĕл пулас мар тесе, тăшман тĕрлĕ тактикăпа усă курма хăтланнă. Нимĕçсем карапсене пуринчен ытла тĕттĕм вăхăтра илсе тухма тăрăшнă, çав карапсене вара хурал суднисем йышлăн хуралласа пынă.

Час-часах начар çанталăк тăнине пăхмасăрах, Хĕрлĕ Ялавлă Балтика флочĕн авиацийĕ тăшманăн Балтика тăрăхĕнчи портсенчен Германи порчĕсене каякан карапĕсемпе уйрăм транспорчĕсене шыра-шыра тупнă. Нимĕçсен транспорчĕсене тинĕс-çар авиацийĕн пур йышши самолечĕсем те — торпедоносецсем, бомбардировщиксем, штурмовиксем тата истребительсем—пыра-пыра çапнă.

Юлашки эрне хушшинче Совет Информаци Бюровĕ Балтика летчикĕсен активлă ĕçĕсене кулленех палăртса пычĕ. Тинĕс авиацийĕ тăшман карапĕсене тинĕспе пынă чухне тата портсенче тăнă чухне пыра-пыра тапаннă.

Летчиксем Балтика тинĕсĕнче тата Финн заливĕпе Рига заливĕнче пĕр эрне хушшинче кăна тăшманăн пĕрле 162 пин тонна таякан 23 транспортне шыва путарнă тата пĕр тральщикĕпе икĕ хурал карапне путарнă. Кунсăр пуçне тата темиçе вунă карапне сиенленĕ. Балтика летчикĕсем, бомбăсемпе штурмласа тата торпедăсем пăрахса, пĕр кун хушшинче кăна нимĕçсен 11 транспортне шыва путарнă, 4 карапне вăйлă сиенленĕ.

Нимĕçсене, çапла, çар пурлăхĕсене Эстонирен тинĕс çулĕпе илсе кайма паман.

Е. КАПЛАНСКИЙ.

Пысăк тупăшлă кок-сагыз

ЕЛЧĔК. Курнавăшри «Автогигант» колхоз кăçал 5 гектар çинчен 90 центнер кок-сагыз тымарĕ тата 160 килограмм вăрлăх туса илчĕ.

Государствăна 1073 центнер çĕрулми парас вырăнне колхоз 76,6 центнер кок-сагыз тымарĕ парса, плана пĕтĕмĕшпех тултарчĕ. Кунсăр пуçне колхоз, государствăна кок-сагыз тымарĕпе вăрлăхне парса, 28 пин тенкĕлĕх тĕрлĕ таварсем илет.

Н. АЛЕКСЕЕВ.

ФЗО шкулĕсемпе училищĕсене вĕренме илмелли призыв

Паян ялсемпе хуласенчи çамрăксене ФЗО шкулĕсемпе ремесленнăй тата чугун çул училищисене вĕренме илес тĕлĕшпе призыв пуçланать. Призыв ноябрĕн 1-мĕшĕччен пырать.

Ялсемпе хуласенчи çамрăксене ФЗО шкулĕсемпе училищĕсене вĕренме илесси вăрçăпа хуçалăх тĕлĕшĕнчен пысăк вырăн йышăнса тăрать. Пирĕн çĕршывра ĕç резервĕсен системи рабочисемпе работникăсен ретне ӳстермелли шанчăклă çăлкуçĕ пулса тăчĕ. Вăрçă вăхăтĕнче кăна ĕç резервĕсен шкулĕсемпе училищисенчен 1.800 пин çамрăка вĕрентсе кăларнă. Вĕсем промышленноçра та, транспортра та, çĕнĕ предприятисем тунă çĕрте те, нимĕç захватчикĕсенчен ирĕке кăларнă районсенчи хуçалăха юсаса ура çине тăратнă çĕрте те хăйсен пултарулăхне лайăх кăтартса пачĕç. Çĕнĕ призыв социализмлă халăх хуçалăхĕ валли квалификациллĕ кадрсен çĕнĕ пысăк ушкăнне хатĕрлеме пулăшмалла. Çĕнĕ призывра ĕç резервĕсен шкулĕсемпе училищисенче вĕренме пĕтĕм Совет Союзĕпе 350 пин çамрăка илмелле.

Призыв ирттерес ĕçе ĕçсынни депутачĕсен совечĕсем çине хунă. СССР Совнаркомĕ йышăннă тăрăх, призыв ирттерес тĕлĕшпе ĕçлеме комиссисем тунă. Вăл комиссисене ĕçсынни депутачĕсен совечĕсен исполком председателĕсем ертсе пыраççĕ. Пирĕн хисеплĕ задача — шкулсемпе училищĕсене вĕренме илмелли плана пĕтĕмĕшпех тултарасси пулать. Çакна пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе комиссисене партипе комсомол тата профсоюз организацийĕсем тимлĕн пулăшма тивĕçлĕ. Вĕсен çамрăксене тата пĕтĕм ĕçсыннисене халĕ, Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче, ĕç резервĕсем мĕнле вырăн йышăнса тăни çинчен, ФЗО шкулĕсемпе училищĕсенче вĕренекенсене паракан çăмăллăхсем тата вĕренмелли условисем çинчен ăнлантарса парас пулать.

Пирĕн государство ФЗО шкулĕсемпе училищĕсенче вĕренекенсене тӳлеттермесĕрех вĕрентет кăна мар, тата вĕсене апатçимĕç те, тумтирсем те, пурăнмалли çурт-йĕр те, вĕренӳ хатĕрĕсем те çителĕклĕ парса тăрать. Шкулсемпе училищĕсенче лайăх организациленĕ классем, мастерскойсем пур. Çамрăксене вĕрентме производственниксене, пултаруллă кадрсене уйăрнă. Çапла, Канашри 6-мĕш номерлĕ ФЗО шкулĕнче плотниксем, слесарьсем, котельщиксем хатĕрлеççĕ. Кунта вĕренӳ çурчĕсемпе общежитисене, хĕрлĕ кĕтесе юсаса хатĕрленĕ. Вĕренекенсем пырсанах, вĕсене тумтирсем, атă-пушмаксем, вырт-тăмалли хатĕрсем параççĕ. Улатăрти чугун çул училищинче те вĕренекенсене таса та çутă классем кĕтсе тăраççĕ. Унта канмалли пӳлĕм, столовăй пур. Ытти шкулсемпе училищĕсенче те вĕренекенсене йышăнса илме начар мар хатĕрленнĕ. Анчах та тунă ĕçсемпе лăпланса лармалла мар. Вĕренекенсене йышăнса илме мĕнле хатĕрленнине халех тĕплĕн тишкерсе тухса, палăрнă çитменлĕхсене пĕтĕмпех пĕтермелле, шкулсемпе училищĕсене хĕле пур енчен те хатĕрлесе çитермелле.

Кăçал Çĕмĕрлере çĕнĕ училище уçăлать. Çĕмĕрле районĕнчи партипе совет тата комсомол организацийĕсен çав училищĕне тĕплĕн хатĕрлесси çине тимлĕн çавăрăнса пăхмалла. Çĕнĕ училище малтанах йĕркеллĕн ĕçлеме тытăнтăр.

Призыва ăнăçлăн ирттерни хыççăн та ĕç вĕçленмест-ха. Вĕренме илнисене шкулсемпе училищĕсене ăсатас, вĕсене йышăнса илес ĕçе тата вĕренӳпе воспитани ĕçне лайăх йĕркелес пулать. Çак тĕлĕшпе ĕç резервĕсен работникĕсене партипе комсомол, профсоюз организацийĕсем тата хуçалăх руководителĕсем тимлĕн пулăшма тивĕçлĕ.

ФЗО шкулĕсемпе ремесленнăй тата чугун çул училищисене вĕренме илмелли призыва кăтартуллăн ирттерсе, вĕренӳпе воспитани ĕçне лайăх йĕркелесе, тăван çĕршыва пултаруллă кадрсем хатĕрлесе парар.

Çамрăк ăрăва çирĕп пĕлӳ тата лайăх воспитани парса ӳстерер

Çичĕ çул вĕренмелли шкулсемпе вăтам шкулсен аслă класĕсенче тата аслă шкулсенче ыран вĕренӳ çулĕ пуçланать. Çĕнĕ вĕренӳ çулĕнче совет шкулĕ çамрăк ăрăва вĕрентсе воспитани парас ĕçе малалла лайăхлатса пыма тивĕçлĕ. Çакна ăнăçлăн пурнăçа кĕртме шкулсен пĕтĕм ĕçне партипе правительство кăтартса панă пек организацилемелле.

СССР Совнаркомĕ «Шкулти вĕренӳ пахалăхне лайăхлатмалли мероприятисем çинчен» йышăннă постановлени учительсемпе, çутĕç работникĕсен тата вĕренекенсен государство умĕнчи ответлăхне нихăçанхинчен те ытларах çĕклерĕ. Вăл постановлени тăрăх, çĕнĕ вĕренӳ çулĕнче пуçламĕш тата çичĕ çул вĕренмелли шкулсенчен вĕренсе тухакансене экзаменсем тыттарас, вăтам шкултан вĕренсе тухакансене аттестатсем илме экзаменсем тыттарас йĕркене ĕçе кĕртнĕ. Экзаменсене лайăх тытакансене ылттăн тата кĕмĕл медальсем параççĕ. Кашни учителĕн тата çутĕç работникĕн кулленхи тивĕçĕ—шкулсенче большевикла йĕркелĕх туса, вĕренӳ пахалăхне лайăхлатасси, çапла вара çĕнĕ вĕренӳ çулне ăнăçлăн вĕçлемелле тăвасси пулать.

Совет шкулĕ умĕнче тăракан задачăсене пурнăçа кĕртнĕ çĕрте комсомолăн шкулсенчи организацийĕсем çинче пысăк ответлăх тăрать. Комсомолăн шкулсенчи организацийĕсен ĕçне мĕнле йĕркелесе пымаллине ВЛКСМ Центральнăй Комитечĕн XII-мĕш пленумĕн решенийĕсенче уççăн кăтартса панă. Çав решенисене пурнăçа кĕртессишĕн комсомол организацийĕсем тимлĕн ĕçленĕ çĕрте вĕренӳ пахалăхне те чылаях лайăхлатма пултарнă. Акă, хĕрачасен Шупашкарти 1-мĕш номерлĕ шкулне илер. Унта комсомол организацийĕ, учительсем активлăн пулăшнипе, вĕренекенсене политика тĕлĕшĕнчен воспитани парас ĕçе лайăх йĕркеленĕ. Вĕренекенсем пушă вăхăтра ВЛКСМ уставĕпе, программипе паллашнă, аслă классенче вĕренекен комсомолецсем Сталин юлташăн «Совет Союзĕн Отечественнăй аслă вăрçи» ятлă кĕнекине вĕреннĕ. Çавăн пекех арçын ачасен 1-мĕш номерлĕ шкулĕнче те комсомолпа пионер организацийĕсем начар мар ĕçлеççĕ. Унта вĕренекенсем докладсем тăвассине организациленĕ.

Асăннă комсомол организацийĕсем хăйсен ĕç планне учительсем, шкул директорĕ тата класс руководителĕсем пулăшнипе тăваççĕ. Учительсем комсомолецсемпе ялан таччăн çыхăнса ĕçлеççĕ. Çакă вăл комсомол организацийĕсен авторитетне çĕклеме пулăшать.

Чылай шкулсенчи комсомол организацийĕсем шкул тулашĕнчи ĕçе лайăх организацилеççĕ. Улатăрти шкулсенче кăçал çамрăк пионерсен техникăллă творчествине пăхса тухмалли тата художествăллă пултарулăх смотрĕсене ирттернĕ. Унсăр пуçне, пионер организацине В. И. Ленин ятне панăранпа 20 çул тултарнине паллă тунă май, пионерсен слетне ирттернĕ. Кун пек примерсем татах та илсе кăтартма пулать. Çак организацисем вĕренӳ пахалăхне лайăхлатма, ачасен пултарулăхне ӳстерме учительсене лайăх пулăшаççĕ.

Анчах, йышăнас пулать, комсомол организацийĕсем совет шкулĕ умĕнче тăракан хисеплĕ задачăсене пурнăçа кĕртессишĕн пур çĕрте те кирлĕ пек ĕçлемеççĕ-ха. Чылай организацисем хăйсен ĕçне вĕренӳ ĕçĕпе çыхăнтармасăр туса пыраççĕ, вĕренекенсемпе начар çыхăнса тăраççĕ. Вĕренекенсем хушшинче дисциплинăна çирĕплетесси, «вĕренекенсем хăйсене тыткаламалли правилăсене» пурнăçа кĕртесси çине те çителĕксĕр çавăрăнса пăхаççĕ. Çамрăксен политикăллă пĕлĕвне ӳстерес ĕçе кирлĕ пек йĕркелемен. Шкул тулашĕнчи ĕçе организацилес енĕпе çитменлĕхсем сахал мар пулаççĕ. Вечерсем, сборсем ирттерес, докладсемпе калаçусем организацилес ĕçсене чылай çĕрте хакламаççĕ. Çак çитменлĕхсене çывăх вăхăтрах пĕтерес пулать.

ВЛКСМ Центральнăй Комитечĕн XII-мĕш пленумĕ комсомолпа пионер организацийĕсен ĕçĕ шкулти воспитани ĕçĕн пĕр пайĕ пулать тесе кăтартса пачĕ. Комсомолăн шкулсенчи организацийĕсен тĕп задачи вăл — вĕренекенсене çирĕп пĕлӳпе воспитани парас тĕлĕшре учительсене, шкул директорне куллен пулăшасси пулать. Комсомол организацийĕсен учительсемпе шкул директорне ачасене кĕнекепе усă курма вĕрентес, çарпа физкультура ĕçне лайăхлатас, ачасене ĕçе хăнăхтарас тата кружоксен ĕçне лайăхлатас енĕпе пулăшмалла.

ВЛКСМ Центральнăй Комитечĕн XII-мĕш пленумĕ йышăннă решени тăрăх, 14 çула çитнĕ лайăх пионерсене комсомола кĕме рекомендаци пама пионер дружинисене ирĕк панă. Анчах та халĕ шкулсенчи комсомол организацисем питех те сӳрĕккĕн ӳсеççĕ. Пăрачкав, Çĕмĕрле, Чкаловски, Йĕпреç районĕсенчи çичĕ çул вĕренмелли шкулсенчен чылайĕшĕнче ку тарана çитсе те комсомол организацийĕсем туман.

Нумай пулмасть, ВЛКСМ Центральнăй Комитечĕ комсомолăн шкулсенчи организацийĕсенче суйлавсем ирттересси çинчен постановлени йышăнчĕ. Комсомол организацисемпе шкул работникĕсен хисеплĕ задачи — суйлавсене лайăх ирттересси пулать. Комсомол организацисене ертсе пырас ĕçе вĕренӳ пахалăхĕшĕн кĕрешессине организацилеме пултаракан комсомолецсене суйламалла.

Комсомол организацийĕсем хăйсен пĕтĕм ĕçне вĕренӳ пахалăхне лайăхлатас май организацилени совет шкулне çĕнĕ вĕренӳ çулĕнче çĕнĕ ӳсĕмсем тума пулăшĕ.

А. ТОКАРЕВ.
ВЛКСМ Обкомĕн секретарĕ.

ОКТЯБРЬ УЯВĔ УМĔНХИ СОЦИАЛИЗМЛĂ АМĂРТУ

Сентябрь уйăхĕнчи плана тултарнă предприятисем

Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăртăва хутшăнса илнĕ обязательствăсене нумай предприятисен коллективĕсем ăнăçлăн пурнăçа кĕртсе пыраççĕ. Çапла, сентябрь уйăхĕнчи производство программине Якунин, Челноков, Володин юлташсем главнăй инженерсем пулса ĕçлекен заводсем тата Шупашкарти табак фабрики срокчен ирттерсе тултарнă.

Хĕрлĕ Çарăн çĕнтерĕвĕсемпе хавасланса

СЕНТЕРВĂРРИ. Уплерти «Труд» промартельте ĕçлекенсем, Хĕрлĕ Çар çĕнĕ çĕнтерӳсем тунипе хавасланса, Октябрь уявĕ умĕнхи ăмăртура çĕнĕ çитĕнӳсем тума сăмах пачĕç. Вĕсем кăçалхи производство планне декабрĕн 5-мĕшĕ тĕлне тултарма палăртнă. Халĕ ĕнтĕ çав обязательствăна чыслăн пурнăçа кĕртсе пыраççĕ. Кашни рабочи нормăна ирттерсе тултарать.

Артелĕн подсобнăй хуçалăхĕнче хĕрӳ ĕç пырать. Артельте ĕçлекенсем пахча-çимĕçсене кĕске вăхăтрах тата пĕр тăкаксăр пухса кĕртме тăрăшаççĕ.

Çултаякри плана ирттерсе тултарнă

КӲКЕÇ, сентябрĕн 30-мĕшĕ. (Телефонпа). Çĕньял Уйкасри «Арăслан» промартель çултаякри плана пĕтĕм продукци туса кăларас енĕпе 118 процент тултарчĕ.

Артель коллективĕ халĕ, Октябрь уявĕ умĕнхи ăмăртăва хутшăнса, уявчен планран ирттерсе продукци пама пулчĕ. Вăл хăй çине илнĕ обязательствăсене кăтартуллăн пурнăçлассишĕн Чапаев ячĕпе тăракан артель коллективĕпе ăмăртса ĕçлет.

Г. ПЕТРОВ.

РЕСПУБЛИКА ТĂРĂХ

Фронтовиксен çемьисем валли

Якунин юлташ главнăй инженер пулса ĕçлекен заводра фронтовиксен çемьисене пулăшмалли фонда укçа пухса парас шугпа воскресник ирттернĕ. Заводри пур рабочисемпе служащисем тата инженерсемпе техниксем те воскреснике активлăн хутшăннă. Уйрăмăнах инструментальщиксем лайăх ĕçленĕ. Фрезеровщик Королев юлташ нормăна 486 процент тултарса ĕçлесе, 102 тенкĕ хывнă, паллă стахановецсем Мищенкăпа Димитренко юлташсем 115-шер тенкĕ ытла хывнă. Воскресник пысăк çĕкленӳпе иртнĕ, завод коллективĕ фронтовиксен çемьисене пулăшма нумай пин тенкĕ укçа пухнă.

Колхозсем шкула пулăшаççĕ

Советски районри Мăн Явăшри 7 çул вĕренмелли шкулта вĕренекен ачасене апатçимĕç тĕлĕшпе пулăшмалли фонд тунă. Çак фонд валли колхозсем 40 центнер тырă, 60 центнер çĕрулми тата ытти пахча-çимĕçсем уйăрса панă. Çавăн пекех колхозсем шкула вутă çителĕклĕ хатĕрлеме пулăшнă.

Мастерсен канашлăвĕ

Куславкка комбинатĕнче мастерсен канашлăвĕ пулса иртнĕ. Канашлу, мастерăн производствăри вырăнĕ çинчен Эскин юлташ докладне сӳтсе-явнă хыççăн, çамрăк кадрсене культурăпа техника тĕлĕшĕнчен воспитани парассине тата производство технологине лайăхлатас тĕлĕшпе тумалли ĕçсене палăртса хăварнă.

Электричествăпа авăн çапаççĕ

Красноармейски районра кăçал 10 колхозра электричество вăйĕпе авăн çапассине организациленĕ. Вăл колхозсенче 10 электромолотилка ĕçлет. «Шимар» колхоз вăрçă пынă кунсенче электростанцие ĕçе янă.

Хусанти оперăпа балет театрĕн концерчĕсем

Елчĕк районĕнчи «Марс» колхоз членĕсем ыйтнипе çак кунсенче унта Хусанти оперăпа балет театрĕн артисчĕсем пырса икĕ концерт панă. Концерта Тутар республикин тава тивĕçлĕ артисчĕсем М. Рахманкулова, Ф. Насрутдинов, С. Садыкова, пурĕ 15 çын, хутшăнчĕç. Концерта курма тата итлеме «Марс» колхоз членĕсем кăна мар, таврари ялсенчен те нумай халăх пухăннă. Концерт программинче ытларах тутар тата пушкăрт халăх юррисем. Вăл юрăсене уйрăмăнах тутарсен тава тивĕçлĕ артистки Сарра Садыкова пысăк мастерлăхпа юрласа пачĕ. Юлашкинчен Джафар Файза çырнă «Шурă чарлансем» ятлă оперетăна лартса пачĕç.

Совет Союзĕн, Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен тата Пĕрлешӳллĕ Королевствăн представителĕсем пĕрле пĕлтерни

Елĕкрех пĕлтернĕ пек, августăн 21-мĕшĕнчен пуçласа Думбартон-Окса (Вашингтон) мирпе хăрушсăрлăха сыхласа тăракан Пĕтĕм тĕнчери организаци тăвас ыйтусемпе малтанлăха официальнăй мар йĕркепе калаçа-калаçа илнĕ. Калаçусене çаксем хутшăннă: Совет Союзĕн делегацийĕ, ăна Совет Союзĕн США-ри посолĕ А. А. Громыко ертсе пынă; Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен делегацийĕ, ăна Государство секретарĕн заместителĕ Стеттиниус господин ертсе пынă; Великобритани делегацийĕ, ăна ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕн заместителĕ Кадоган господин ертсе пынă.

Çав виçĕ делегаци председателĕсем паян çакăн пек пĕлтерӳ пичетлесе кăларнă:

«Совет Союзĕн, Пĕрлешӳллĕ Штатсен тата Пĕрлешӳллĕ Королевствăн делегацийĕсен Хăрушсăрлăха сыхласа тăракан Пĕтĕм тĕнчери Организаци тăвасси çинчен Вашингтонра пынă калаçăвĕсем вĕçленчĕç.

Çав калаçусем усăллă пулчĕç, вĕсенче Организацин пĕтĕмĕшле планĕ пирки, уйрăм илсе кăтартсан — мирпе хăрушсăрлăха сыхласа тăма кирлĕ механизм пирки правительствăсене мĕн сĕнмелли çинчен нумай енчен калаçса татăлнă.

Виçĕ делегаци халь хăйсен правительствисене докладсем яраççĕ. Правительствăсем вара вăл докладсене пăхса тухĕç те кирлĕ вăхăтра çак ыйтупа пурте пĕр вăхăтрах хăйсен шухăшĕсене каласа парĕç».

Хĕвеланăç Европăри вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, сентябрĕн 29-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ сентябрĕн 29-мĕшĕнче пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă:

Союзниксен çарĕсем Неймеген хули патĕнче савăлланса кĕнĕ районра хăйсен флангĕсене çирĕплетнĕ. Тăшманăн Схейндель хули енчен тунă контратакине сирсе янă, вара союзниксен çарĕсем Хертогенбос патнелле кăштах малалла кайнă. Антверпен хулипе Теригаут хули хушшинчи канал çинче тăшмана тапăнма тунă укрепление аслăлатнă.

Люксембург герцогствин кăнтăр-хĕвелтухăç пайĕнче союзниксен çарĕсем Ремих хулине ирĕке кăларнă. Унтан кăнтăртарахра Пор-сюр-Сель хулине йышăннă. Нанси хулинчен хĕвелтухăçнерехре тăшманăн темиçе контратакине сирсе янă.

Эпиналь хулипе Бельфор хули хушшинчи участокра союзниксем самаях пысăк çитĕнӳсем тунă. Тăшманăн хаяр контратакисене пурне те сирсе янă, нимĕçсене йывăр çухату тӳстернĕ.

Тăшман хытă хирĕç тăнине çĕнтере-çĕнтере, союзниксен çарĕсем Кале хулине çавăрса илнĕ унка хĕссех пыраççĕ. Хула патĕнчи паха çӳллĕ вырăнсем пурте союзниксен аллинче. Союзниксен çарĕсем Кале крепоçне йышăннă.

Пĕр пин йывăр бомбардировщик ытла, истребительсен пысăк соединенийĕсем хӳтĕлесе пынипе, Мерзебургри промышленность предприятийĕсене, синтетически нефть заводне, Магдебургри чугун çул станцине, çавăн пекех тата Кассель хулинчи танк заводне тапăннă. Сывлăшри çапăçусенче тăшманăн 36 самолетне пĕтерсе тăкнă. Пирĕн 61 самолет хамăрăн базăсене таврăнман.

ЛОНДОН, сентябрĕн 29-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Вăтаçĕр тинĕс таврашĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен штабĕ сентябрĕн 29-мĕшĕнче пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă: 5-мĕш армири Америка çарĕсем Болонья хулипе Флоренция хули хушшинчи тĕп шоссе çулĕ çинче виçĕ пахха çӳллĕ вырăна туртса илнĕ. Хĕвелтухăçнерехре Америка çарĕсем Фиренцуэла хулипе Имола хули хушшинчи çул тăрăх самаях малалла кайнă. Адриатика секторĕнче 8-мĕш арми çарĕсем питĕ хаяррăн çапăçнă. Рубикон шывĕнчен çурçĕртерехри сăртлă вырăнта тăшман темиçе тĕлте те вăйлă контратакăсем тунă.

Сентябрĕн 28-мĕшĕнче, çанталăк начар тăнă пирки, авиаци вăйлах кĕрешеймен.

ЭЙЗЕНХАУЭР ГЕНЕРАЛ ГЕРМАНИ ХАЛĂХНЕ ЧĔНСЕ КАЛАНИ

ЛОНДОН, сентябрĕн 29-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, сентябрĕн 28-мĕшĕнче каçхине союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй главнокомандующийĕ Эйзенхауэр генералăн Германи халăхне чĕнсе каланă пĕрремĕш прокламацине пичетлесе кăларнă. Прокламацире çапла каланă: «Германин эпĕ командир пулса ертсе пыракан çарсем оккупациленĕ районĕнче эпир нацизма тата Германи милитаризмне пĕтерсе тăкатпăр. Эпир нацистсем пуç пулса тăнине пĕтеретпĕр, нацистсен партине салатса яратпăр, çав парти кăларнă хаяр, çынсене пусмăрлакан тата вĕсене тан мар тăвакан законсемпе учреждениcене пăрахăçа кăларатпăр. Эпир тĕнчери мирлĕ пурнăçа час-часах пăснă Германи милитаризмне тĕппипех пĕтерсе лартатпăр. Нацистсен партийĕн членĕсене, çар çыннисене, гестапо членĕсене тата ытти çынсене те, преступленисемпе тискер ĕçсем тунă пирки айăплă пек туйăнсан, суда паратпăр, вара, чăнахах айăплă пулсан, вĕсене тивĕçлипе наказани паратпăр».

Общинăсен палатинче Черчилль тухса каланă сăмах

ЛОНДОН, сентябрĕн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, паян премьер-министр Черчилль общинăсен палатинче тĕнчери лару-тăру çинчен сăмах тухса каланă; залра халăх лăк-туллиех пулнă. Черчилль çапла каланă: юлашки çичĕ эрне хушшинче Европăра вăрçă ĕçĕсем пĕтĕмпех улшăнса кайрĕç, тенĕ. Унтан вăл Франципе, Бельгие тата Голландин пĕр пайне ирĕке кăларни çинчен каланă. Нимĕçсен 400.000 çын вилнĕ е аманнă тата 500.000 çын тыткăна лекнĕ, тенĕ. Унтан вăл çапла каланă: 200.000 нимĕçе çыран хĕррисенчи кĕрепоçсенче е Голландире татса илнĕ пулмалла, вĕсене пĕтерсе тăкма е тыткăна илме пулать пек туйăнать, тенĕ.

Çакă вăл Нормандири пĕтĕм тĕнче пĕлсе тăракан çапăçусен результачĕ пулчĕ, тенĕ Черчилль.

Италири çапăçусем çинчен каласа, Черчилль «Бразилин ытла та лайăх дивизине» палăртнă, çав дивизин хăшпĕр чаçĕсене эпĕ хам куртăм, вĕсен боецĕсем — «калама çук лайăх боецсем», тенĕ (çакăн хыççăн залри çынсем хытă алă çупнă).

Унтан Черчилль Францире хальхи вăхăтра 2 миллионран пуçласа 3 миллиона çити салтак пурри çинчен каланă. Пĕрлешӳллĕ Штатсем Европăри вăрçăра Англие пулăшнине тата вĕсем Лăпкă океан çинче «аслă вăрçă» вăрçнине пысăка хурса, Черчилль çапла каланă: «Хăватлăран хăватла тата чаплăран чаплă пулса тăнă çак тăванла нацие пирĕн палата тивĕçлипе саламлама пултарать. Çак çапăçăва эпир те тивĕçлĕ вклад хывма пултарнăшăн эпĕ савăнатăп», — тенĕ Черчилль.

Çĕр çирĕм кун çапăçнă хыççăн Ла-Манш каналĕ урлă каçнă Англи çарĕсем Америка çарĕсен йышĕпе 2:3 пек шайлашса тăраççĕ, Францире çапăçакан Англи дивизийĕсем Америка дивизийĕсемпе 4:5,5 пек шайлашса тăраççĕ. Çухатусем çапăçусене хутшăннă çарсен йышĕпе пропорциллĕ пекех. Акăлчансен 90.000 çынна яхăн вилнĕ, аманнă е пĕр хыпарсăр çухалнă; американецсен, Пэтч çарне те шутласан, 145.000 çынтан ытла пĕтнĕ.

Бирмăри вăрçă ĕçĕсем çинчен Черчилль çапла каланă: японецсен унта 50—60 пин çын вилнĕ. Пуринчен ытларах тĕлĕнтерсе савăнтаракан факт çакă: Маунтбэттен адмирал ертсе пынă çапăçусем Япони çарĕсене хирĕç çĕр çинче хăçан та пулин тунă çапăçусенчен пуринчен те вăйларах çапăçусем пулнă.

Черчилль часах çапăçма пăрахма пулĕ тесе вăхăтсăр ĕненекен çынсене ятланă. Вăрçа пĕтерес тесен, 1945 çулта та темиçе уйăх хушши кĕрешмелле пулать пуль-ха, тенĕ. Анчах вăл çавăнтах çапла хушса каланă: «Вăрçă пĕтес срока юлашки пуçкасакана хăйĕн шăтăкĕнче вĕлеричченех тăсма кирлĕ тесе каламастпăр эпир», тенĕ. Унтан вăл çапла каланă: Англи Лăпкă океанра вăйлă флот пухса тăратма ĕмĕтленет, çав флот пĕр хăй кăна та Япони тинĕс-çар флотне хирĕç çапăçма çителĕклĕ пулать.

Палата пăртаклăха канса илнĕ хыççăн Черчилль тулашри политика çинчен каласа панă. Вăл каланă тăрăх, Германие хирĕç кĕрешекен виçĕ аслă державăн союзĕ халь нихçанхинчен те тачăрах та вăйлăрах пулса тăнă. Россия Польша чиккинчи территорисене улăштарас ĕçре хăйне Англи пулăшассине шанма пултарать. Вырăссен хĕçпăшалĕ çеç Польшăна нимĕçсен пусмăрĕнчен ирĕке кăларма пултарать. Германирен асап курнă вырăссем хăйсен чиккисене хăйсемшĕн хăрушă мар тума тата хăйсемпе юнашар хĕвеланăçĕнче туслă нацисем пурăнмалла тума пултараççĕ. Польшăн премьер-министрĕ тата унăн юлташĕсем, тен, часах Мускава тепĕр хут тĕл пулса калаçма пуçлĕç.

Малалла Черчилль çапла каланă: Франције ирĕке кăларни Англие пуринчен те ытларах савăнтарчĕ. Черчилль каланă тăрăх, вăл француз халăхĕ çĕнĕрен çĕкленсе чаплă та хăватлă халăх пулса тăрассине яланах шанса тăнă. Франци çитес вăхăтра союзниксен аслă совечĕсенче хăйне тивĕçлĕ вырăн йышăнĕ, хальхи вăхăтра ку тĕлĕшпе калаçусем пыраççĕ, тенĕ Черчилль.

Думбартон-Оксри калаçусем çинчен Черчилль çапла каланă: ман шухăшпа, виçĕ правительствăн руководителĕсем тепĕр хут пĕрле пухăнса калаçиччен çителĕклĕ лайăх килĕшӳ тума май çук; çав руководительсемпе пĕрле, кирлĕ пулсан, ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕсем те пулĕç. Виçĕ правительствăн руководителĕсем кăçалах çавăн пек тĕл пулса калаçĕç тесе шанатăп эпĕ, тенĕ Черчилль. Пĕтĕм тĕнчен малашнехи пурнăçĕ, тенĕ вăл, çав виçĕ держава пĕр-пĕрне чунтан чĕререн шанса тата ăнланса çыхăнса ĕçленинчен килет, тенĕ. Çитес вăхăтра кирек мĕнле решени йышăнсан та, вăл пĕтĕм тĕнчери организацие туса çитерес умĕн тăвакан ĕç çеç пулса тăрать, тенĕ.

Тĕнчери лару-тăру

Сентябрĕн 29-мĕшĕнче Совет командованийĕпе Югослави халăхĕн ирĕклĕх комитечĕ тунă килĕшӳ çинчен пĕлтерӳ пичетлесе кăларнă. Çав пĕлтерӳрен çакă курăнать: Совет командованийĕ Ирĕклĕх комитетĕнчен тата Югослави халăхĕн ирĕклĕх çарĕн командованийĕнчен совет çарĕсене Югославин Венгрипе юнашар выртакан территорине вăхăтлăха кĕме ирĕк пама ыйтнă, çавăн пек туни тăшманăн Венгрири çарĕсене хирĕç кĕрешме кирлĕ, тенĕ. Ирĕклĕх комитечĕ тата Югослави халăхĕн ирĕклĕх çарĕн командованийĕ Совет командованийĕ ыйтнипе килĕшнĕ.

Çак килĕшӳ вăл ирĕклĕхе юратакан икĕ халăх хăйсен пĕрлехи тăшманне — нимĕç империализмне хирĕç кĕрешекен икĕ халăх пĕр-пĕрне питĕ лайăх ăнланнине кăтартса парать. Вăл гитлерла Германие хирĕç Балтика тинĕсĕнчен пуçласа Адриатика тинĕсĕ патне çитиччченех пĕр тăтăш фронт тунине пĕлтерет. Фашистла тискер кайăкăн шăтăкне йĕри-тавраха çавăрса илнĕ.

Балтика тăрăхĕнче Хĕрлĕ Çар, гитлеровецсен çарĕсене аркатса пырса, Совет Эстонине оккупантсенчен тасатса çитернĕ. Нимĕçсен 16-мĕш армийĕн юлашкийĕсем Рига патĕнче пĕтсе лараççĕ. Унта совет çарĕсем калама çук пысăк çитĕнӳ тунă.

Балтика тăрăхĕнчен кăнтăралла фронт Хĕвелтухăç Прусси чиккипе юнашар пырать, унтан Польша территорийĕ тăрăх Чехословаки чикки патнелле пырать. Кăнтăрта пирĕн çарсем Трансильванири Альпы тăвĕсем урлă каçнă та Арад хулине тытса илнĕ, çапла вĕсем Венгри улăхне кайма çул уçнă.

Италире, союзниксен пĕлтерĕвĕнче каланă тăрăх, союзниксен çарĕсем Рубикон ятлă шыв урлă каçса кайнă. Нимĕçсен «Готлинине» татнă. Союзниксен çарĕсем тулă-сăртлă районран По шывĕ улăхне тухаççĕ, унта вара çапăçма çăмăлтарах пулать. Гитлерăн Италири Кессельринг ертсе пыракан çарĕн ĕçĕсем пачах шанчăксăр.

Хĕвеланăçĕнче çапăçусем Нанси хулинчен тата Мозель шывĕнчен хĕвелтухăçнерехре, çавăн пекех тата Аахен хули районĕнче пыраççĕ. Голландире Неймеген хули патĕнче союзниксем нимĕçсен позицийĕсем çине хăватлăн шăтарса кĕнĕ. Çакна пула ĕнтĕ тăшман Маас, Вааль шывĕсемпе тата Рейн шывĕн анатри пайĕпе оборона рубежĕ вырăнне усă курма пултараймасть.

Кунсăр пуçне тата тинĕсре те, сывлăшра та союзниксем пуç пулса тăнине шута илсен, фашистла Германие пур енчен те хупăрласа илни уççăнах курăнса тăрать. Фашизм пĕтсе ларатех ĕнтĕ. Гитлеровецсем, йĕри-таврах хупăрласа илнĕ бандит пекех, хăйне шеллес çуккине пĕлсе тăракан бандит пекех, хаяррăн хирĕç тăрса çапăçаççĕ. Çавăнпа та ĕнтĕ вăрçăн юлашки тапхăрĕнче союзлă çĕршывсен питĕ нумай вăй хурса çапăçмалла пулать.

Гитлерла стратегипе пĕрле нимĕçсен пропаганди те пĕтĕмпех пăчланса ларнă. Вăл кушана ырлăх вырăнне кăтартма шутлани ытла та кулăшла. Сăмахран, «Гамбургер фремденблатт» хаçат питĕ кулăшла хăтланнă, вăл Гитлер сăмах чĕнмесĕр тăнипе усă курма шут тытнă. Кунта ĕç акă мĕнле пулнă: йĕркерен тухса кайнă авантюрист, темиçе çул хушши павраса çӳренĕскер, сасартăк нимĕн те чĕнми пулса ларнă. Ахаль çын, паллах ĕнтĕ, ăнланса илеймест: мĕн пулчĕ Гитлера, мĕншĕн çак мухтанчăк «Европăна çĕнтерсе илме» хапсăннă çын калаçма пăрахрĕ?—тет.

«Гамбургер фремденблатт» хаçат Гитлер хăрана пирки нимĕн те шарламасăр ларнине «нумай япалана пĕлтерет вăл» тесе ăнлантарма шут тытнă. Анчах та, хăй те сисмесĕрех, Гитлер мĕн пирки «тĕлĕнмелле» нимĕн те чĕнмесĕр ларнине çара шыв çине кăларнă. Вăл çапла çырнă: «Германи салтакĕсем калама çук хаяррăн çапăçаççĕ, анчах фюрер нимĕн те шарламасть. Румыни, Болгари, Финлянди вăрçма пăрахрĕç. Гитлер çаплах нимĕн те шарламасть. Сăмах чĕнмесĕр тăни пĕтĕм Германире халь пуç пулса тăрать». Хаçатăн çак сăмахĕсем чăнах та нумай япалана пĕлтереççĕ! Вĕсем гитлеровецсем халăха нимĕн те калама пултарайманнине кăтартса параççĕ. Гитлер вăл хăйĕн сăмахĕсене никам та ĕненменнине пĕлнĕ пирки нимĕн те каламасть. Фашистсен ытти пуçлăхĕсене те халь ĕненмеççĕ. Çакна Лей йышăннă. «Ангрифф» хаçатра вăл çапла çырнă: «Кирек мĕн пулсан та, эпĕ малашнехине ĕненетĕп. Эпир çĕнтеретпĕрех! «Айван сăмахсем»—тейĕç мана. Çак кунсенче мана хамăн пĕр авалхи пĕлĕш çапла каларĕ: «Малашнехи вăл тупăсем, самолетсем ытларах пулнинчен килет, вăл хăватлă танксенчен, çын калама çук нумай пулнинчен килет»... терĕ».

Çапла ĕнтĕ, малашнехине ĕненме кансĕр пулса тăнă. Акă мĕншĕн ĕнтĕ Гитлер нимĕн те шарламасть.

Хĕрлĕ Çар Польшăна ирĕке кăларассишĕн ăнăçлăн çапăçать. Ăна Польша çарĕсем пулăшса пыраççĕ. Тăшмантан тасатнă çĕр çинче çĕнĕрен ирĕклĕ пурнăç пуçланса каять. Çĕнĕ Польша çуралса ӳсет. Ирĕклĕх комитечĕ тавра пĕрлешнĕ поляк халăхĕ хăйĕн çĕршывĕн хуçи пулса тăрать.

Поляк халăхĕн аслă историллĕ çапăçăвĕ çине пăхсан (çав çапăçура патриотла, демократиллĕ, фашизма хирĕçле вăйсем пурте Ирĕклĕх комитечĕ тавра пĕтĕçсе пыраççĕ), Лондонри эмиграцири «правительствăра» кушакайăксем пек хăтланни ытла та килĕшӳсĕр курăнать. Çав «правительствăра» каллех «кризис»» пуçланнă. Сосновский, хăйĕн авантюристла планĕсем пĕтĕмпех путланса ларнине курса, йăлтах йĕркерен тухса кайнă; çавăн пирки ăна «правительствăри» хăйĕн юлташĕсем те нумайĕшĕ кăмăллами пулнă. Вĕсем Сосновские вырăнтан тухма ыйтнă. Анчах та «президент» Рачкевич çакăнпа килĕшмен. Вăл çакăн пек тусассăн çеç Сосновские вырăнтан кăларма килĕшнĕ: Англи хасачĕсем калалă тăрăх, вăл «правительствăна» ĕлĕкхи авантюристла, халăха хирĕç пыракан, тĕрĕссипе каласан — Гитлер майлă политикăна тытса пыма пултармалла туса «улăштарасшăн».

Çак «кризиса» халĕ те татса паман-ха.

Польшăри малта пыракан çынсем Ирĕклĕх комитечĕ тавра пĕрлешни çав комитет Польшăри демократиллĕ партисемпе — «Стронництство людовепе» (хресченсен партийĕпе), ППС-па (социалистсен партийĕпе), Поляксен рабочи партийĕпе, Поляксен демократиллĕ партийĕпе пĕрле ĕçленинчен лайăх курăнать.

Ирĕклĕх комитечĕ аллинчен çĕр илекен поляк хресченĕсем тата халăхăн аслă массисем хăйсен государствин пуçĕнче чăннипе демократиллĕ правительство тăнине кураççĕ.

* * *

Фашистла Германин пуçлăхĕсем, гитлеровецсен пропаганди тата фашистсем майлă çыракан мĕнпур хаçатсем союзниксем пĕр-пĕринчен уйăрălса каяссине шанса тăнă. Анчах та вăрçă преступникĕсен çав шанчăкĕ путланса ларнă. Вăрçă пынă май Совет Союзĕн, Англин, Пĕрлешӳллĕ Штатсен тата ирĕклĕхе юратакан ытти çĕршывсен союзĕ çирĕпленнĕ. Çакна хаçатсем Европăри консультаци комиссийĕн ĕçĕсем çинчен пĕлтерни тата Думбартон-Оксри конференци çинчен виçĕ державăн представителĕсем пĕрле пĕлтерни лайăх кăтартса параççĕ. Лондонран пĕлтернĕ тăрăх, Европăри консультаци комиссийĕ Германие пĕр сăмахсăрах парăнтармалли йĕркене туса хатĕрленĕ. Вăл Германие тата унăн столицине Берлина Совет Союзĕн, Англин тата Пĕрлешӳллĕ Штатсен çарĕсем оккупацилемелли плана, Германие демиллитаризацилемелли тата «гитлерла крепоçăн» хĕçпăшалĕпе çар пурлăхне союзниксен аллине памалли плана та çырса хатĕрленĕ.

Думбартон-Оксри конференци, ун çинчен пĕлтернинче каланă тăрăх, мирпе хăрушсăрлăха сыхласа тăмалли организацин сăнарне палăртса хунă.

Я. ВИКТОРОВ.

Финляндири лару-тăру

Фашистла организацисене салатса яни çинчен

СТОКГОЛЬМ, сентябрĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Сентябрĕн 27-мĕшĕнче финсен Хельсинкире тухакан хаçачĕсем çакăн пек пĕлтерӳ пичетлесе кăларнă: Финлянди правительстви Гитлер майлă ĕçлекен (фашистла) организацисене чылайĕшне салатса яма йышăннă. Халлĕхе çак организацисене салатса яма йышăнни паллă пулнă: Патриотла Халăх Юхăмĕ (ИКЛ) ятлă партие, Карелсен Академилле Союзне, Финсен Нацистла Партине, СС Соратникĕсен Союзне («Асевели»), Финн Журналисчĕсен Союзне тата Нацистла Обществăна.

* * *

СТОКГОЛЬМ, сентябрĕн 28-мĕшĕ. (ТАСС). «Дагенс нюхетер» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Финлянди правительстви политика тĕлĕшпе тĕрмесенче ларакансене чылайĕшне ирĕке кăларнă. Вăл шутра Хэлла Волиокки, Рюемя, Вийк тата Кай Сундстрем.

Çурçĕр Финляндирен пĕлтернĕ тăрăх, унта Финлянди çарĕсем çаплах каялла куçса пыраççĕ.

США-ри СУЙЛАВ УМĔН

НЬЮ-ЙОРК, сентябрĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Грузовик шоферĕсен профсоюзĕн комитечĕ çитес суйлавра президента Рузвельта суйлама тăрăшма йышăннă пулнă. Çав профсоюзăн ятарласа пухнă конференцийĕ (Рузвельт çав конференци умĕнче суйлав умĕн пĕрремĕш хут радиопа сăмах тухса каланă) халь хăйĕн комитечĕ йышăннине ырланă.

Çак кунсенче профсоюзсен ытти чылай организацийĕсем те, çав шутра Америкăри ĕç федерацийĕн Нью-Йоркри тата Миннеаполисри организацийĕсен пĕрлешĕвĕсем, Миннесот штатĕнчи профсоюзĕн съезчĕ, каучук промышленноçĕнче ĕçлекен рабочисен профсоюзĕн Нью-Йоркри съезчĕ тата ыттисем те çавăн пек резолюцисемех йышăннă.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ШУПАШКАРТИ КИНОТЕАТР

октябрĕн 1-мĕшĕпе 10-мĕшĕ хушшинче комсомолецсемпе çамрăксен фестивальне ирттерет.

Çакăн пек фильмсем кăтартаççĕ: октябрĕн 1-мĕшĕпе 2-мĕшĕнче

«Ж Д И М Е Н Я»

Кашни сеанс умĕн лекци пулать.

Сеанссем çак вăхăтра пуçланаççĕ: 12, 14, 16, 18, 20, 22 сехетре.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместитель секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 00720 Типография № 1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР, Заказ № 2, ф. б. 59Х42 п. л. Тираж 16,000 экз.